# САВАҪА — САВАҪРАН

*П. Хусанкая*

Ача-пăча!.. Хĕлле ҫил витĕр
чупса кĕреҫҫĕ те пӳрте
тем тупнă пек калаҫҫĕ: «Питĕ
сана саватăп эп, атте!»

Кайран вара — янах хуралĕ,—
тирпейлĕ, ăслă йĕкĕтсем
шухăшларах пуплеҫҫĕ халĕ,
шухăшларах юратнăҫем.

Ҫапла-ҫке юрату юмахĕ:
хуллен кĕрет вăл йĕркене.
Ĕнер ҫеҫ пулнă пек, асрах-ха
упратăп Шупашкар каҫне.

Эп унăн кантăкне сăнатăп,
лере, тăваттăмĕш хутра,
ун мĕлкине хăш чух куратăп
вăл иртнĕ чух ҫут ункăра.

Ах, Вагнер, эс ҫапла тинкернĕ
тахҫан Бетховен мĕлкине,
эс музыкăра ҫеҫ ҫитернĕ
ăна курас ыр ĕмĕтне.

Тен, ҫывăх Моцарт пит инҫе пек
такамшăн туйăннă ҫапла...
Эп ҫакă виҫепе виҫетĕп
ун чух пăлханнă кăмăла.

Тен, халь урăхларах куратăп,
ăна сапла тинкеонĕскео.
тен, канашне сахал тăнлатăп,
унччен савса итленĕскер?

Эппин, ман кăмăла пĕлтерччĕр
ҫак лăпкă сăвă йĕркисем —
ман салама илсе ҫитерччĕр
поэтăн пӳлĕмне вĕсем!

1954—1960